**Чĕрепе калаçни**

— Мĕнле пурăнатăн, чĕрем?
Санпа тахçанах калаçман.
Пĕлетĕн — куна та çĕре
Ĕçре ирттеретĕп ялан.
Асаплă-и эс? Ан пытар.
Хаваслă-и эс? Савăнтар.

— Çунатăп хитре саманан
Тĕпренчĕкĕ пулччĕ тесе.
Эс тунă тупа, эп манман
Çĕршыв çулăма кĕмессе.
Юрат юратма пулнине,
Ылхан ылхана юлнине.

— Чĕрем, кăвакарчĕ тăнлав,
Умри çул вара кĕске мар.
Канма хистесе ан йĕнла —
Çунат хальлĕхе усăнман.
Енчен тв ӳкес-мĕн пулсан,
Тăмашкăн хал çитĕ-и сан?

— Эп канлĕх ыйтмастăп санран,
Суйма, шахвăртма вĕренмен.
Хăвна шаннă евĕр эс шан,
Хăвна та, мана та ĕнен.
Ыр ĕçшĕн кăна çунатлан,
Ыр чунлă çынна ынатла.

— Чĕремçĕм, хур кайăк çулне

Утса тухасах килет ман.
Пĕлетĕп, зс ĕмĕт умне
Нихçан та тĕкме хăпартман.
Хавшамĕ-и ĕмĕт-çунат,
Пăрахмĕ-и вăл хуçуна?

— Çунсан самана вучĕпе,
Умра — çĕнĕ кун, сĕм кай мар.
Курма пĕл ача куçĕпе,
Ват çын чĕлхипе калаçма.
Никам тĕлĕнмест тĕк, пĕрех
Эс тĕлĕн тĕнче хитререн.

*Гордеев, Д. Чĕрепе калаçни : [сăвă] / Д. Гордеев // Тăван Атăл. – 2010. – № 2. – С. 84-85.*